# Турă Пурне Те Тунă Чухне



Çыравçи: Edward Hughes
Иллюстрацилекенĕ: Byron Unger; Lazarus
Alastair Paterson
Куçаруçи: www.christian-translation.com
Адаптацилекенĕ: Bob Davies; Tammy S.

Утмăлăшĕнчен пĕрремĕш халапĕ

**M1914.org**

**Bible for Children, PO Box 3, Winnipeg MB  R3C 2G1  Canada**

Лицензи: сутса яриччен сирĕн çак халапа копилесе
илме е пичетлеме ирĕк пур.

Пире кам тунă?  Библи, Турă Сăмахĕ, этем йăхĕ мĕнле пуçланса кайни çинчен каласа парать.  Ĕлĕк-авалах Турă пĕрремĕш çынна пултарнă та ăна Адам ят панă.



1

Турă Адама тăпраран тунă.  Турă Адама чун парнелесен вăл чĕрĕлнĕ.  Вăл Эдем ятлă илемлĕ садра пулнă.



2

19

20

21

22

23

Эпир япăх ĕçсем тунине турă пĕлет.
Çылăхшăн наказани-вилĕм.

Турă пире питĕ хытă юратнăран Хăйĕн Ывăлне Иисуса Хĕрес çинче вилме тата пире наказани пама янă.  Иисус чĕрĕлнĕ те Пĕлĕте таврăннă!  Халĕ Турă пирĕн çылăхсене каçарма пултарать.

Эсир хăвăр çылăхăрсенчен пăрăнасшăн пулсан, çакна Турра калăр: Хаклă Турă, Иисус маншăн вилнине тата халĕ каллех пурăннине эпĕ ĕненетĕп. Тархасшăн, ман пурнăçа кĕр те манăн çылăхсене каçар: эпĕ çĕнĕ пурнăçпа пурăнам, кайран Вара ĕмĕрлĕхех Санпа пĕрле пулам.  Хăвăн ача пек пурăнма пулăшсам мана.  Аминь.   Иоанн 3:16

Библие вулăр та Турăпа кашни кун калаçăр!

Chuvash

Адама пултариччен Турă тĕлĕнмелле япаласемпе тултарнă чаплă тĕнче тунă. Майĕпен-майĕпен Турă çуллĕ тусемпе сăртсене, ырă шăршă саракан чечексемпе çӳллĕ йывăçсене, тĕрлĕ тĕслĕ кайăкпа хурт-кăпшанка, мăнаçлă китсемпе лăймакаллă шуйсене туса хунă. Тĕрĕссипе каласан,



тĕнчере мĕн пуррине пурне те Турă тунă.

3

Чи малтанах, турă мĕн те пулсан тăвиччен, тĕнчере Турăсăр пуçне урăх нимĕн те пулман. Пĕр çын та, пĕр вырăн та, пĕр япала та. Нимĕн те. Çутă та, тĕттĕм те пулман. Ни çӳллĕшĕ, ни аялăшĕ. Ĕнерĕ те, ыранĕ та. Нимле те пуçланса кайман ĕмĕрхи Турă кăна пулнă. Çапла турă ĕçе пикеннĕ! Малтан Турă тӳпепе çĕре йĕркеленĕ.



4

Çĕр калăпсăр та пушă пулнă. Тĕпсĕр авăр пичĕ çинче сĕм-тĕттĕм пулнă. Унтан турă калаçма пуçланă: "Çутă пултăр", — тенĕ.



5

Çапла çутă пулса кайнă. Турă çутта Кăнтăр тесе ят панă, сĕмлĕхе Çĕрле тенĕ. Каç та, ир те пĕрремĕш куннех пулса кайнă.



6

Иккĕмĕш кунне Турă Пĕлĕт айĕнчи океансемпе тинĕссене, кӳлĕсене йĕркене кĕртнĕ. Виççĕмĕш кунне Турă: "типĕ çĕр курăнтăр", — тенĕ. Вăл та пулнă.



7

Çавăн пекех турă курăка, чечексене, йывăçсене ӳссе тухма хушнă. Вĕсем те курăннă. Каç та пулнă, висçĕмĕш кунхи ир те пулнă.



8

Унтан Турă хĕвелепе уйăха тата никам шутласа кăлармалла мар нумай çăлтăр тунă. Каç та пулнă, тăваттăмĕш кунхи ир те пулнă.



9

Унтан Турă тинĕс чĕрчунĕсене, пулăсене тата вĕçен кайăксене тунă. Пиллĕкмĕш кунне Вăл пысăк хĕç-пулăпа пĕчĕк сардинăсене, вăрăм уралла страуссемпе хаваслă пĕчĕк колибрисене тунă. Турă çĕр çинчи юхан-шывсене тултарма, тавралăхпа киленсе пурăнма тĕрлĕ пулă тĕсĕсемпе вĕçен кайăк тĕсĕсене туса кăларнă. Каç та пулнă, пиллĕкмĕш кунхи ир те пулнă.



10

Çакăн хыççăн Турă каллех калаçма тытăннă. Турă: "Çĕрĕмĕр тĕрлĕ чĕр чунсене çутта кăлартăр..." — тенĕ. Вара Çĕр çинче мĕн пур чĕр чун, хурт-кăпшанкă, çĕлен-калта тĕсĕсем çутта тухнă. Унта çĕре чĕтретекен слонсемпе вĕткĕленчĕк хăнтăрсем пулнă. Чăрсăр упăтесемпе йăраланчăк крокодилсем. Авкаланакан ăмансемпе харсăр пăрăнтăксем. Çӳллĕ жирафсемпе мăрăлтатакан кушаксем. Пур чĕр чуна Турă пĕр кунтах туса кăларнă.



11

Каç та пулнă, улттăмĕш кунхи ир те пулнă.



12

Улттăмĕш кунне Турă тата тепĕр тĕлĕнмелле ĕç тунă. Халĕ ĕнтĕ Этеме пурăнма пĕтĕмпех хатĕр пулнă. Хирте ăна валли апат та, ăна пулăшса тăракан чĕр чунсем те пулнă. Вара Турă: "Хамăр евĕрлĕ этем тăвăпăр. Вăл çĕр çинче пуриншĕн те хуçа пултăр", — тенĕ. ТУРĂ ЭТЕМЕ ХĂЙ ЕВĔРЛĔ ТУСА КĂЛАРНĂ, ĂНА ТУРĂ ЕВĔРЛĔ ТУНĂ ...



13

Турă Адампа калаçнă чухне çапла каланă: "Пахчаран мĕн çиес килет, çавна çийĕр. Анчах ырăпа усала пĕлмелли йывăçăн çимĕçĕсене ан çийĕр. Эсир çав йывăçăн çимĕçне çисен вилетĕнех".



14

Вара Турă çапла каланă: "Этеме пĕччен пурăнма аван мар. Эпĕ ăна пулăшса тăраканне туса парнелетĕп". Турă Адам патне мĕн пур вĕçен кайăкапа тискер кайăкасене илсе пынă. Адам вĕсене пурне те ят парса тухнă. Вăл питĕ ăслă тунă, паллах. Анчах та вĕçен кайăксемпе тискер кайăксем хушшинче Адам валли юрăхлă юлташ тупăнман.



15

Турă Адама тарăн ыйха путарнă. Çывăракан çыннăн аяк пĕрчинчен пĕрне кăларса илнĕ те çав аяк пĕрчинчен Хĕрарăма туса кăларнă. Турă тунă хĕрарăм Адам валли лайăх тантăш пулса тăнă.



16

Ултă кун хушшинче Турă пĕтĕмпех туса пĕтернĕ. Çавăнпа Турă çиччĕмĕш куна канмалли тесе пилленĕ. Эдем пахчинче Адампа Ева, унăн арăмĕ, пĕр çитменлĕхсĕр турра итлесе пурăнни телей кӳнĕ. Турă вĕсен ПАТШИ, вĕсене Тăрантараканĕ тата вĕсен Тусĕ пулнă.



17

Турă Пурне Те Тунă Чухне

Турă Сăмахĕнчи, Библири, халап

ра вырнаçнă

Пултарни1-2

"Сирĕн Сăмахăрсен алăкĕ çутă парать."
Псалом 119:130

18